# Майăн 1-мĕшĕ - Çуркуннепе Ĕç уявĕ


Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N 48 (4617) | *1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 1-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*


## Пĕрремĕшĕсем пулса



В.В.ЕРЕПОВ



И.П.БЕЛОВ

АКА - I - 98

Пӳлеркӳлсем çуркунне хире пĕрремĕшĕсем пулса тухнине никам та астумасть. Кăçал вара районта хирти çурхи ĕ ç с е н е пĕрремĕшĕсем пулса шăпах вĕсем пуçларĕç.

- Халь кăна-ха акă техника хатĕрлĕхне тĕрĕслес тĕлĕшпе тĕрĕслев иртрĕ. Шăпах çавăн чухне эпир çак хире пăхса, пĕрле канашласа ĕçе пуçлама шухăш тытрăмăр, - тет Владимир Ерепов, костера вăрлăх валли ӳстерекен 13 гектар лаптăк çинчи икĕ агрегата кăтартса. Вăл - бригада агрономĕ, кăçал вара унсăр пуçне "Урнякра" йĕркеленнĕ пилĕк кооперативран пĕрне ертсе пырать. Халь вăл акă унăн кооперативне уйăрса панă 920 гектарăн пĕчĕк пайĕ çинче тăрать. Ку лаптăк пĕчĕккĕ пулин те, паян ăна пысăк тимлĕх уйăраççĕ: çакăнтан хирти çурхи ĕçсем пуçланаççĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Аттестаци те, лицензилесси те

Çак кунсем аптекăсенче ĕçлекенсемшĕн питĕ хĕрӳ пулчĕç: республика центрĕнчи эмел препарачĕсене туса кăларас тата вĕсен пахалăхне тĕрĕслес енĕпе ĕçлекен ĕçтешĕсем аптекăра ĕçлекенсене аттестацилерĕç тата районти аптека учрежденийĕсене лицензилерĕç. Çак учрежденисен ертӳçисен заявкисене тĕпе хурса ку ĕçе кашни çул ирттереççĕ. Аптека сетĕнче ĕçлекен 13 провизор тата 30 фармацевт экзамена ăнăçлă тытса аттестаци иртнĕ ĕнтĕ. Лицензилессипе çыхăннă ĕçе икĕ енлĕ пурнăçланă: эмелсем сутма тата вĕсене туса кăларма ирĕк паракан лицензисене уйăрмăшар панă. Çапла, эмелсем сутма ирĕк паракан лицензие çаксем илнĕ: районти 94-мĕш номерлĕ тĕп аптека, Чулпанти, Кивĕ Чаллăри, Мамăкри, Кивĕ Элметри апткăсем тата Нурлатри 180-мĕш номерлĕ аптека. Ытти аптекăсенче, Элметрисĕр пуçне, эмелсем туса кăларма ирĕк паракан документсене хатĕрлесе пĕтернĕ ĕнтĕ (Элметри аптекăра ку енĕпе условисем çук).

Эмел препарачĕсене сутма ирĕк парас тĕлĕшпе лицензилессине кăçал пĕрремĕш хут 6 аптека киоскĕсем хутшăннă, вĕсем тĕрĕслеве ăнăçлă иртнĕ.

## Ура! Хусан-Нурлат поезд çӳрет!



Пире, кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчен Хусан-Нурлат поезд çӳреме тытăнни çинчен пĕлтерчĕç. Поезд çӳрессин расписанийĕ пассажирсемшĕн питĕ меллĕ: Хусантан вăл уйăхăн мăшăрсăр числисенче 22.35 сехетре, Нурлатран вара мăшăрлă числисенче (кун урлă) 17.55 сехетре тухать. Хусан-Нурлат поезд çултăлăкĕпех çӳрессине йĕркелес ыйтăва Патшалăх Канашĕн депутачĕсем: Нурлат территори округĕ тăрăх, Тутарстан Премьер-министрĕ Ф.Х.Мухаметшин тата хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин тăрăшнипе татса панă. Темиçе хутчен ыйтнă хыççăн, халь вара, нумаях пулмасть Ф.Х.Мухаметшин Нурлата килсен Куйбышев чугун çулĕн начальникĕпе А.С.Левченкопа хăй тĕл пулса калаçнă.

### Редакци почтинчен

## Пуçлăха чун-чĕререн саламлатпăр

***"Администраци пуçлăхне Ф.С.Сибагатуллина çуралнă кун ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Эпир унăн ыркăмăллăхне яланлăхах асра тытăпăр, çынсемшĕн тата çĕнĕ усăллă ĕçсем тума пиллетпĕр. Ăна çирĕп сывлăх, çемьере тăнăçлăх, ĕçре ăнăçлăх, телей сунатпăр".***
**Чугун çул поселокĕнчи мечĕте çӳрекенсен ятĕнчен Р.М.Рахматуллин администраци пуçлăхне çакăн пек сăмахсемпе ырă суннă.**

## Уявра - хирте

Майăн 1-мĕшĕн уявне ăçта паллă тума шутлатăр тесе ыйтни çине Афгат Шаяхметов кĕскен çапла хуравларĕ:

- Ăçта пултăр ĕнтĕ, хирте!

Чăнах та, 28 çул ĕнтĕ вăл Майăн 1-мĕшне хирте кĕтсе илет. Пĕрремĕшĕсен хушшинче хире тухать те мĕн кĕркуннеччен унта вăй хурать. Кăçал та юр ирĕлсе пĕтсе çĕр ĕлкĕрсе çитсенех Афгат Асхатович хăйĕн тракторне хире илсе тухрĕ. Вăл тăваттăмĕш бригадăра çурхи тулă акмалли анасем çинче нӳрĕк тытать. Опытлă çĕр ĕçченĕ çĕр ĕлкĕрсе çитнине питĕ лайăх чухлать. Кăçал хирсем хăвăрт ĕлкĕрнине, çавăнпа та васкамаллине вăл пĕлет. Ытти ĕçченсем те ун пекех канăçсăр: пĕр хире тĕрĕслеççĕ, теприне. Иккĕмĕш кун иккĕмĕш бригадăри Рашид Фардиевпа Ильгизар Салимгареев та нӳрĕк тытма тухрĕç. Яшсем шанса панă ĕçе питĕ тĕплĕн пурнăçлаççĕ, участоксене суйласа илеççĕ.

Акă çапла тытăнчĕç "Алга" хуçалăхри хирти ĕçсем. Ан тив, опытлă çĕр ĕçченĕн алли çăмăл пултăр, çултăлăк вара пуян тухăçпа савăнтартăр. Хуçалăх ĕçченĕсем çакна шанаççĕ.

**С.НУРУЛЛИНА.**

## Условисем çителĕклĕ

Хальхи вăхăтра хресчен хуçалăхĕсен Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн ĕçченĕсем пĕр ĕнерен вăтамран 14,4-шар килограмм сĕт сăваççĕ. Ку пĕлтĕрхи шайпа танлаштарсан, 4,2 килограмм нумайрах.

Юлашки çулсенче ку хуçалăхра фермăри ĕçсене икĕ сменăпа пурнăçлаççĕ, ку меслете вĕсем чи лайăххи тесе шутлаççĕ. Ĕнесене çултăлăк тăршшĕпе тенĕ пекех виçĕ хут сăвассине йĕркеленĕ.

Кăçал выльăх-чĕрлĕх пăхакансем уйрăмах тухăçлă ĕçлеççĕ. Ăмăртура 1-мĕш сĕт-çу ферминчи Суфия Мухамметовапа Ирина Набиеван ушкăнĕ малта пырать. Виçĕ уйăх хушшинче вĕсем пĕр ĕнерен вăтамран 1115 килограмм сĕт сунă. Икĕ Татьяна - Ковшовапа Мамедова та вĕсенчен кăшт кăна кая юлса пыраççĕ. Вĕсен ушкăнĕнче ку кăтарту 1071 килограмм шутланать. Хальхи вăхăтра вĕсем талăкра чи нумай сĕт суса илеççĕ - 15,8 килограмм. Çак ăнăçлăхра выльăх-чĕрлĕх пăхакан Минсалих Валиахметовăн тӳпи те пур. Сăмах май каласан, Татьяна Мамедова, инçетри Азербайджанран килнĕскер, кунта пĕр çулталăк çеç ĕçлет-ха. Анчах фермăра ĕçлеме тытăннă пĕрремĕш кунсенченех, çине тăрса, тăрăшса вăй хурать.

Фермăра ĕçлĕ ларутăру хуçаланать. Ферма заведующийĕ Тамара Григорьевна Трофимова выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ыйтăвĕсене лайăх пĕлет, мĕншĕн тесен хăй нумай çул дояркăра ĕçленĕ. Çавăнпа ĕçе пĕлсе йĕркелет. Пĕрлехи ăнăçлăха выльăх-чĕрлĕх пăхакан Владимир Порфирьев, пăрулаттаракан уйрăм доярки Зинаида Маськина тата ыттисем те пысăк тӳпе кĕртеççĕ.

Хальхи вăхăтра выльăхсем валли çуллахи лагерьсем хатĕрлеççĕ. Ку ĕçе опытлă та тăрăшуллă Николай Аркадьевич Захаров ертсе пырать. Хăйне шанса панă ĕçе вăл лайăх пурнăçласса иккĕленмелли çук.

**Л.ГРИГОРЬЕВА,**
**зоотехник.**

### Вулакансене пĕлсе тăма

**Уяв кунĕсем пулнипе хаçатăн çитес номерĕ юнкун, майăн 6-мĕшĕнче тухать.**

# телепрограмма

***Экспресс-центр*** Экспресс-центр*** Экспресс-центр*** Экспресс-центр***

## ПОНЕДЕЛЬНИК

### 4 МАЯ

**ОРТ**

8.00 Комедия«У матросов нет вопросов».
9.25 Мультфильмы.
10.00 Новости.
10.10 Домашняя библиотека.
10.30 «Утренняя почта»
11.10 «Каламбур».
11.45 Футбольное обозрение.
12.20 Фильм « Весна на Заречной улице»
14.00 Смехопанорама.
15.00 Новости.
15.20«Снова неуловимые».
16.30 Старые песни о главном-3.
19.00 Хоккей.
20.45 Спокойной ночи, малыши.
21.00 Время.
21.35 Комедия «С девяти до пяти».
23.50 Абажур.
0.20 Новости.
0.30« За все надо платить». Х/ф.

**РОССИЯ**

7.00 Утренний экспресс
[illegible]0 Утро крестьянина.
[illegible].20 Красная книга.
9.15 Аншлаг.
10.10 Творческий вечер Винокура.
14.00 Вести.
14.30 Музыкальный ринг- новое поколение.
15.50 Заключительный концерт дней Украины в России.
17.15 Номинация ТЭФИ.
17.35 «Пропавшая экспедиция». Фильм.
20.35 Кинокомедия. «Трембита»
22.15 Комедия« Безрассудный Бомарше»
0.00 Дежурная часть.
0.15 Сиреневый туман.
0.55 Автошоу.
1.25 Прогноз погоды.

**РИО**

16.45 Гала-концерт звезд эстрады на фестивале в Сургуте.
18.30 Шоу Натальи Нафталиевой и группы «Мегаполис».
19.25 Новости.
19.30 Ток-шоу «Акулы пера».
20.30 Новости дня.
20.55 Кинотеатр ТВ-6. «Киборг».
22.55 ТСН-6.
23.05 ДИСК-канал.

## ВТОРНИК

### 5 МАЯ

**ОРТ**

6.00«Доброе утро».
9.00,12.00,15.00 18.00, 0.15 Новости.
9.15,18.20«Роковое наследство».
10.00 Смехопанорама
10.50 Здоровье.
11. 20 Домашняя библиотека.
11.30 Угадай мелодию.
12.15 «Вместе»
13.00 Трагедия века.
13.55 Борьба.
14.10 Хоккей.
15.20 Мультсериал.
15.55 Счастливый случай.
16.40 «Пещера Золотой Розы»
17.10 ...До 16 и старше.
17.30 Вокруг света.
19.05 Час пик.
20.00 Тема.
20.45 Спокойной ночи , малыши!
21.00 Время.
21.40« На войне, как на войне.»
23.30 Женские истории
0.00 Хоккей.

**РОССИЯ**

7.00 М/ф
7.15Проснись.
7.30 Вести.
8.00 Дежурная часть.
8.30 Деньги.
8.45 Графоман.
8.55 «Православный календарь».
9.05 Диалоги о животных.
10.05,20.45 «Санта-Барбара».
11.30 К-2 представляет
14.00 Вести.
14.35 «Собачий нос».
15.20 «Маленький бродяга».
15.50 «Арабела».
17.00 Вести.
17.30 Студенческая весна.
18.10 Построй дом.

***

20.25Подробности.
21.45«Петербургские тайны».
22.10«Пси-фактор»
0.05«Дежурная часть».
0.20Горячая десятка.

**РИО**

17.05 ДИСК-канал.
17.30 ТСН-6.
17.35 Дорожный патруль.
17.50 Оперативные хроники.
18.00 Док.сериал.
18.30 Студия-2.
19.15 Шесть новостей.
19.30 Ток-шоу.
20.30 «Новости дня».
20.55«Вавилон 5».
21.50 Новости.
21.55. «Эпоха за эпохой»
23.50 ТСН-6.

## СРЕДА

### 6 МАЯ

**ОРТ**

6.00 «Доброе утро».
9.00,12.00,15.00, 18.00, 23.45 Новости.
9.15,18.20«Роковое наследство».
10.00 Тема.
10.45 В мире животных
11.20 Домашняя библиотека.
11.25 Джентльмен-шоу.
12.15 «Вместе».
13.00 «Трагедия века».
13.50 Мультфильм.
14.10 Хоккей
15.20 Мультсериал.
15.45 Классная компания.
16.10 Зов джунглей.
16.40 «Пещера Золотой Розы» . Сериал.
17.10 ...До 16 и старше.
17.35 Вокруг света.
19.05 Час пик.
19.30 «Золотая лихорадка».
20.10 Человек и закон.
20.45 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Время.
21.40, 0.30 Хоккей.
22.40 Футбол.

**РОССИЯ**

7.00 Мультфильм.
7.15 Проснись.
7.30,11.00,14.00,17.00, 20.00,23.45 Вести.
8.00 «Дежурная часть».
8.20 «Медицинский вестник».
8.30 Деньги.
8.45 Графоман.
8.55 «Православный календарь».
9.00«Осторожно: дети»
9.20 Маски - шоу.
10.05,20.45 «Санта-Барбара».
11.35 «Петербургские тайны».
12.35 Моя семья.
13.30 «У всех на устах».
14.30 «Собачий нос».
15.30 «Маленький бродяга».
15.40 « Арабела».
16.40 На дорогах России
17.00 Вести.

***

20.00 Вести.
20.25 Подробности.
21.45 «Петербургские тайны».
22.50 «Пуаро Агаты Кристи». Телесериал.
0.05 «Дежурная часть».
0.20 Живая коллекция.

**РИО**

17.05 ДИСК-канал.
17.30 ТСН-6.
17.35 Дорожный патруль.
17.50 Оперативные хроники.
18.00 Док.сериал .
18.30 Студия-2.
19.15 Шесть новостей.
19.30 Ток-шоу.
20.30 «Новости дня».
20.55Кинотеатр ТВ-6.Комедия.
23.05 ТСН-6.
23.15 ДИСК-канал.

## ЧЕТВЕРГ

### 7 МАЯ

**ОРТ**

6.00 «Доброе утро».
9.00,12.00,15.00, 18.00, 23.45 Новости.
9.15,18.20«Роковое наследство».
10.05 Человек и закон.
10.40 Пока все дома.
11.20 Домашняя библиотека.
11.20 Домашние животные.
12.15 «Вместе».
13.00 «Трагедия века».
13.55 Мультфильм.
14.30Хоккей
15.20 Мультсериал.
15.45 Классная компания.
16.10Волшебный мир.
16.40 «Пещера Золотой Розы» . Сериал.
17.10 ...До 16 и старше.
17.35 Вокруг света.
19.05 Час пик.
19.30 Эти забавные животные.
20.10 В поисках утраченного.
20.45 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Время.
21.40 Хоккей.
0.35 Фильм «До свидания, дети.»

**РОССИЯ**

7.00 «Морские псы».
7.15 Проснись.
7.30,11.00,14.00,17.00 20.00,23.45 Вести.
8.00,0.15 «Дежурная часть».
8.20 Стронг представляет.
8.30 Деньги.
8.45 Графоман.
8.55 «Православный календарь».
9.05 Вовремя.
9.35 Сам себе режиссер.
10.05,20.40 «Санта-Барбара».
11.30,21.45 «Петербургские тайны».
12.25 Совершенно секретно.
13.20ТЭФИ.
13.55 Ваши любимые животные.
14.30«Собачий нос».
15.20 «Маленький бродяга».
15.50 «Арабела ».

***

20.25 Подробности.
21.45 «Притворщик».
22.35 «Аншлаг» и Ко.
0.00«Дежурная часть».
0.20 Подиум д'Арт.
0.40 Лучшие игры НБА.
1.20 Питерский рок-фестиваль.

**РИО**

17.05 ДИСК-канал
17.30 ТСН-6
17.35 Дорожный патруль
17.50 Оперативные хроники Самары
17.55 19.10 Самарская погода.
18.00 Документальный сериал
18.30 Студия два
19.15 Шесть Самарских новостей
19.30 «Сделай шаг»
20.30 Новости дня
20.55 Кинотеатр ТВ-6
22.50 ТСН-6
23.05 ДИСК-канал

## ПЯТНИЦА

### 8 МАЯ

**ОРТ**

7.00 «Доброе утро».
10.00,15.00,1.20 Новости.
10.15 Клуб путешественников.
11.00 Смак.
11.25 Играй, гармонь любимая!
12.15 Вместе.
13.00 Трагедия века
13.55 Мультфильм.
14.10 Хоккей.
15.20Фильм-сказка.
16.35Улица Сезам.
17.05 « 50 Х 50»
17.35 Вокруг света.
19.05 Здоровье.
19.40 Поле чудес.
20.45 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Время.
21.40« Женя,Женечка и Катюша » Фильм .
23.20 Взгляд.
0.10 Новости.
0.30 «Щит и меч»Х/ф.

**РОССИЯ**

7.00 «Морские псы».
7.30 Вести.
8.00 Дежурная часть.
8.20 Стронг представляет.
8.30 Деньги
8.45 Графоман
8.55 Православный календарь.
9.00 Док. фильм.
9.30 Док. сериал.
10.05 «Санта-Барбара»
11.30 «Петербургские тайны».
12.30 Старая квартира
14.00 Вести.

14.30 «Собачий нос»
15.20 «Маленький бродяга ».
15.50 «Арабела.»
17.30 «Сквозь огонь»

***

20.00 Вести.
20.30 Подробности
20.45 Сам себе режиссер
21.15 Городок.
21.45 День радио.
23.55 Вести
0.15 Дежурная часть
0.30 Фильм« Я тебя помню»

**РИО**

17.05 ДИСК-канал
17.30 ТСН-6
17.35 Дорожный патруль
17.50 Оперативные хроники Самары
17.55 19.10 Самарская погода.
18.00 Документальный сериал
18.30 Студия два
19.15 Шесть Самарских новостей
19.30 Катастрофы недели
20.00 «Вы - очевидец»
20.30 Новости дня
20.55 Кинотеатр ТВ-6. «Они сражались за Родину», 1-2 серии
00.00 «Такси ТВ-6»
00.15 ТСН-6

## СУББОТА

### 9 МАЯ

**ОРТ**

8.00 Доброе утро.
9.50 Красная площадь
10.50« Играй, гармонь любимая»
11.40 Служу России.
12.10 Х/ф «Подвиг разведчика»
13.40 Концерт
15.00 Новости
15.15 Как это было.
16.00 Судьба человека
17.40 Киноконцерт.
18.50 Минута молчания.
19.10 «А зори здесь тихие»
20.45 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Время.
23.15 Хоккей.
0.40«Щит и меч»Х/ф

**РОССИЯ**

7.00 Мультфильм.
8.05Фильм .
9.10Док .фильм.
9.40 Ваши любимые мелодии.
9.50 Трансляция с площади.
11.00 Почта РТР.
11.15 Фестиваль солдат
12.50 ТЭФИ.
13.05 Ищу тебя
14.00 Вести.
14.30 Там-там.
16.00 Арена.
16.20 Футбол.
17.20 Арена.
18.50 Минута молчания.
19.05 Митинг-реквием.
20.00 Вести.
20.35 Ваши любимые мелодии.
21.00 Х/ф.
22.40 Вечер памяти Булата Окуджавы.
0.50 «Актриса»

**РИО**

7.00 Шесть Самарских новостей. 7.10 Самарская погода. 7.15 «РИО-Маркет». 7.35 Мультфильм «Солдатская сказка». 7.55 Мультсериал «Детектив Боги». 8.30 Детский сеанс «Жила-была девочка». 9.50 Мультфильм «Не топтать фашистскому сапогу нашей Родины». 9.55 Кинотеатр ТВ-6 «Антон Рыбкин». 10.55 Музыка кино. 11.05 Маленькое утреннее шоу «З.К.». 11.30 ТСН-6. 11.45 «Место происшествия». 12.05 Мультфильм «Стервятники». 12.10 Кинотеатр ТВ-6. «Парень из нашего города». 13.50 Кинотеатр ТВ-6 «Два бойца». 15.15 Музыка - кино. 15.45 Кинотеатр ТВ-6. «В шесть часов вечера после войны». 17.30 ТСН-6. 17.40 Мультфильм. 18.10 «На войне, как на войне...» 18.50 Светлой памяти павших в борьбе против фашизма. Минута молчания. 19.05 «Звезды о звездах» Артисты поздравляют ветеранов войны.
19.45 «И божество, и вдохновенье...». 21.00 Кинотеатр ТВ-6. «Наградить посмертно».
22.50 «С.С.П. Студия».
23.40 «Такси ТВ-6».
00.00 ТСН-6.

## ВОСКРЕСЕНЬЕ

### 10 МАЯ

**ОРТ**

8.00«Васек Трубачев и его товарищи».Фильм.
9.30 Лотто-Миллион. Спортлото.
9.45 Слово пастыря.
10.00,15.00 Новости.
10.10«Непутевые заметки».
10.30 Пока все дома.
11.10 Утренняя звезда.
12.00 Крестьянские ведомости.
12.30«Иван Никулин-русский матрос»
14.05 Смехопанорама.
15.00 Новости.
15.20Подводная одиссея команды Кусто.
16.15 Колесо истории .
17.00Музыкальная история.
18.15 Ералаш.
18.50« В бой идут одни старики».Фильм.
20.45 Спокойной ночи малыши
21.00 Время.
21.40 Хоккей.
0.30 Новости.
0.45 «Щит и меч».Х/ф.

**РОССИЯ**

7.00 Утренний экспресс.
7.50 Служу Отечеству!
8.20«Осторожно,модерн »
8.50 Мультфильм.
9.20 Позвоните Кузе!
9.45 Вовремя.
10.15 Доброе утро, Страна!
11.00 Почта РТР
11.55«Чародей. Страна великого дракона».
12.45 «Там-там».
13.40 «Мир книг с Леонидом Куравлевым».
14.00 Вести.
14.30 Тур «ДДТ».
15.00 Парламентский час.
15.50«Закон и порядок»
16.40 Диалоги о животных.
17.40 Совершенно секретно.
18.40 Старая квартира.
20.00 Зеркало.
21.00 Творческий вечер Ильи Резника .
23.10 «Театр +TV »
23.55 К-2 представляет
0.50 Русский бой.
1.45 «Чердак. Убежище Анны Франк»

**РИО**

7.00«Благая Весть». 7.30 Музыка кино. 7.50 Дорожный патруль. 8.00 Мультфильм 8.25 Мультсериал 8.55 «О тех, кто украл луну». 10.10 Мультфильм 10.25 «Спасибо за покупку!». 10.40 Видеоклипы. 10.55 Шоу еды 11.30 ТСН-6. 11.45 «Стильно!!!» 12.00 «Канон». 12.35 . «Я тебя никогда не забуду». 14.05 «Нью-Йорк, Нью-Йорк». 14.40 Ток-шоу. 15.35 Видеоклипы. 15.40 Телемагазин 15.55 Док.сериал 16.25 Спорт недели. 17.00 «РИО-Маркет». 18.00 Тур-клуб , 18.15 Воскресная студия два. 19.00 «Обозреватель». 20.05 «Бегство к Афине». 22.25 Концерт

Утерянный диплом серии ЛТ N 324659, выданный Альметьевским строительным техникумом на имя Сатдарова Альбирита Галиаскаровича, считать недействительным.

Срочно продается однокомнатная квартира. Обращаться: ул. Циолковского, 11-17 с 9.00 - 20.00.

Продается ВАЗ -21083. Телефон: 5-17-79, после 16-ти часов.

*Хăна юррисем*

## *Асăнса, тăвансем, пырса курăр*

**Анмăттăмччĕ эпĕ, ай, шыв хĕрне,
Юрататăп шывăн сассине.
Килмĕттĕмччĕ эпĕ сирĕн пата,
Юрататăп çемçе чĕлхене.**

**Ай, çиессĕм килет, çиес килет,
Кăвакарчăн ашне чун савать.
Ай, ĕçессĕм килет, ĕçес килет,
Симĕс кĕленчене чун савать.**

**Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн сыпа-сыпа
Пуçăм ўсĕрĕлнĕ пек туйăнать.
Сирĕнпе, тăванăм, калаçсассăн
Пуçа ăс кĕнĕ пек туйăнать.**

**Çеçенхир варринче çавра кўлĕ,
Çавра кўлĕ тавра хурлăхан.
Хурлăханĕ пиçсе çитнĕ иккен,
Ăна татма вăхăт çитнĕ иккен.
Эпирех те килни нумай пулать,
Пире кайма вăхăт çитнĕ иккен.**

**Хуралту вăрманĕн, ай, варринче
Кантăр вăрри тĕслĕ кайăк пур.
Асăнса, тăвансем, пырса курăр:
Атте-анне пĕçернĕ çимĕç пур.
Атте-анне пĕçернĕ çимĕç пур,
Сире хăналама эпир пур.**

**Пухса йĕркелекенĕ
Е.ИЛЮШКИНА.**

## Упăшкипе арăмĕ

### Халĕ те таврăнман

- Упăшкашăн пăшăрханса ларатăп-ха. Кушака аташтарма тесе кўршĕ яла кайрĕ те хĕвел тухсанах.

- Хуçăлса ан ўк-ха. Тен, кĕçех таврăнĕ.

- Ара, кушакĕ пĕр сехет ĕнтĕ кăмака çинче мăрăлтатса ларать.

### Май çук

Паллашнăранпа виçĕ уйăх иртсен. Марук Ваççаран çапла ыйтать:

- Тăванусемпе хăçан паллаштаратăн-ши эсĕ мана?

- Каçар, чунăм. Халĕ май çук-ха. Ачасем ялта пурăнаççĕ, арăм кăнтăра канма кайрĕ.

### Шўтленĕ

- Петĕр, кукăль тума çĕр улми шуратса параймăн-ши? - тет арăмĕ, кăмака умĕнче аппаланакanскер.

- Çу-ук, çывăрас килет ман.

- Ахаль каларăм сана, вĕсене паçăрах шуратса хунă эпĕ.

- Чунăмçăм, эпĕ те шўтлерĕм. Ăна ухутапах шуратса панă пулăттăм.

- Пит аван. Эпĕ те шўтлесе илес терĕм. Нўхрепе ан та çĕр улми илсе тух.

## Кушак тĕлĕкĕ

Çуркунне. Хĕвеллĕ, лăпкă, ырă кун. Пĕр пĕччен (япăх çуртра) пурăнакан Наççа аппан аçа кушакĕ Ваççа анкартинче юлнă паранкă аври купи çине тухса выртнă, канлĕ çывăрать, тĕлĕк курать: пуян кил-çуртра пурăнать вăл. Кил хуçисем - коммерсантсем. Вĕсем çăмăл пурăнаççĕ. Вĕсемшĕн саккун çук - тем те тума пултараççĕ. Çавăнпа та вĕсем патĕнче Ваççа Турă ачи пек пурăнать. Кил хуçисем ăна хисеплесе Василь Васильчă тесе чĕнеççĕ, ARIEL (ариель), DOMESTOS порошоксемпе, CLAIROL, EVALINA шампуньсемпе çăваççĕ, махровăй алшăллипе шăлса типĕтеççĕ, WHISKAS, KITEKAT асамлă çимĕçсене çитереççĕ, канма уйрăм пўлĕме, уйрăм ăшă вырăн çине вырнаçтараççĕ, мамăклă утиялпа витсе хураççĕ... Каярахпа, вăл ыйхăран вăрансан, VOLVO (Вольво) машина çине лартса ярăнтараççĕ. Рех-хет! патшасем те кун пек ырлăха курман пулĕ. Хўри çине пуссан та, сăмси умĕн утсан та халь Ваççа шăши чĕпписем çине çаврăнса та пăхас çук. Фи! Тĕлĕнтермĕшсем!... Кама кирлĕ вĕсем...

Çакăн пек ырă тĕлĕк курса выртнă вăхăтра çывăрса выртакан кушак аçи Ваççа патне кушак ами Таççа йăпшăнса пырать, сăмах калать:

- Аван-и, Ваççа... Сывлăх сунатăп. Ку хушăра, тем, курăнмастăн, тухса çўреместĕн... Тунсахларăм. Килсе курас терĕм.

- Фу! Кам унта шавласа çўрет, тăрă сывлăша пўлет?

- Эпĕ ку, Ваççа, санăн кўршĕ - Таççа. Палламарăн-и? Каçар, Ваççа...

- Ваççа мар эпĕ, Василь Васильчă. Манăн хуçасем - паллăятлă çынсем, мана вĕсем çапла чĕнеççĕ, хисеплеççĕ. Эсĕ кам? Типнĕ, хытнă Таççа, урăх никам та мар. Эпĕ вара... эпĕ...

- Ах-ах-ах! Эсĕ-и? Эсĕ пыйтлă-шăртлă Ваççа! Ман патăма пыраттăн: "Пĕрре юрат-ха, Таççа," - тесе йăлăнаттăн... Пуçăнти пыйтусене те эпех суйлаттăм...

Халь вара мана палламастăн та-и? Сысна пек наян эсĕ, автан пек вĕçкĕн, чăхă пек хăравçă, сурăх пек ăссăр. Тахçанах каппайчăк пулнă - çаплах юлнă.

Кушак аçи Ваççа тинех вăранса каять, питне-куçне хура аллипе сăтăрса илет, хăй типнĕ-хытнă паранкă аври çинче выртнине курса Таççа умĕнче вăтанса, хĕрелсе каять, çамки тăрăх тар шăпăртатса анать.



**В.Ефремов.**

## Волейбол

Арçынсен командисем хушшинче районти волейбол вăййин уçă ăмăртăвĕ вĕçленчĕ.

Пĕрремĕш çаврăм хыççăн хресченсен хуçалăхĕсен "40 лет Победы" ассоциацийĕн команди мала тухрĕ, вăл пĕр хут та выляса яман. Иккĕмĕш вырăнта - МПП команди (1 хут выляса янă), виççĕмĕшĕнче - НГДУ "Нурлатнефть" (2 хут выляса янă).

Чулпансене хăйсем патĕнче НГДУ команди çĕнтернĕ пулин те, иккĕмĕш çаврăмра вĕсем чемпион ятне сыхласа хăварчĕç.

Кунта вара пĕрремĕш вырăна хресченсен хуçалăхĕсен "40 лет Победы" ассоциацийĕ тухрĕ (11 очко), иккĕмĕш вырăна - НГДУ "НН" (10 очко), виççĕмĕшне - МПП (9 очко).

Ăшă сечĕсен, НУРБ тата Гайтан ялĕн командисем те лайăх вылярĕç. Кăçал, темĕнле сăлтава пула, районти ăмăртура яланах малти вырăнсене йышăнакан е чемпионсем шутланнă командăсем хутшăнмарĕç. Вĕсем çаксем: хресченсен хуçалăхĕсен Кузнецов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн тата "Тĕрнеç" хуçалăхăн командисем. Хуçалăхсен ертўçисен çакна асра тытмалла: ассоциацисен малашлăхĕ çамрăксен сывлăхĕнчен килет.

* * *

Çав вăхăтрах хĕрарăмсен командисем хушшинче волейбол вăййин ăмăртăвĕ хулара пĕрремĕш хут иртрĕ. 3 команда çеç хутшăннă пулин те, малтанлăха ку аван. Мĕнпур вăйăра çĕнтерсе, 2-мĕш номерлĕ шкулти педагогсен коллективĕ хула чемпионĕ пулса тăчĕ. Иккĕмĕш вырăна 4-мĕш номерлĕ шкулти педагогсен коллективĕ тухрĕ, виççĕмĕш вырăнта - сахăр завод команди. Çĕнтерўçĕ командăна парнесемпе тата грамотăпа наградăланă.

* * *

Район Кубокне çĕнсе илес тĕлĕшпе йĕркеленĕ арçынсен командисем хушшинчи волейбол ăмăртăвĕ вĕçленчĕ. Пĕрремĕш тĕлпулура сахăр завод команди якуркелсене çĕнтерчĕ, иккĕмĕшĕнче - НГДУ-НУРБ.

Çурма финалта МПП команди якуркелсене, НГДУ "Тĕрнеç" спиртзавод командине çĕнтерсе финала тухрĕç. Финалта НГДУ "Тĕрнеç" команди 3:2 шутпа çĕнтерсе район Кубокне илме тивĕç пулчĕ.

**Х.ФАТУЧЕВ.**


## Пĕлтерўсем

*Мунир Шакирович Галимов ячĕпе панă водитель удостоверенине тупакана тавăрса пама ыйтатпăр, парне пулать. Адрес: Шашин урамĕ, 15-3.*

* * *

*1990 çулта туса кăларнă ВАЗ-2107 сутăнать. Телефон: 2-17-76.*

* * *

*1991 çулта туса кăларнă питĕ хайăх шайри ВАЗ-2107 сутăнать, 60 000 километр çўренĕ. Хакĕ 23 пин тенкĕ. Телефон: 2-12-75.*

**Хисеплĕ акционерсем! "Нурлат-Нефть-Инвест" ЧИФ 1996 çулшăн дивидентсем тўлет. Хăвăрпа пĕрле акционерсен свидетельствипе паспорт пулмалла. Адрес: К.Маркс урамĕ, 12.**

## Пĕлтерўсем

*1986 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061 сутăнать. Адрес: Нефтяниксен урамĕ, 6-15, телефон: 65-0-66, НУРБ коммутаторĕ урлă.*

* * *

*Сахăр завочĕн микрорайонĕнчи приватизациленĕ пĕр пўлĕмлĕ хваттере (32 тăваткал метр, 4-мĕш хут) çавăн пеккипех улăштаратпăр. Телефонсем: 5-20-47, 2-12-52.*

* * *

*"Ява-350" сутăнать. Телефон: 2-19-20.*

* * *

*Иккĕмĕш хутри пĕр пўлĕмлĕ хăтлă хваттер сутăнать. Адрес: Циолковский урамĕ, 11-95.*

* * *

*Асхат Каримович Хамадиев ячĕпе панă АЕ 889441, 889442, 889444 - 889450 номерсемлĕ страховка свидетельствисене (форми 25) тĕрĕс мар тесе шутламалла.*

* * *

*Чугун çул поселокĕнче пăсмалли çурт сутăнать. Адрес: Советская урамĕ, 139-5.*

* * *

*"Тула-2022" баян сутăнать. Адрес: Советская урамĕ, 189-98.*

* * *

*Некрасовкăри пахчаçăсен "Нефтяник" юлташлăхĕнче дача сутăнать. Адрес: Циолковский урамĕ, 2.*

* * *

*Ильнур Закиуллович Яруллин ячĕпе панă водитель удостоверенине тупакана тавăрса пама ыйтатпăр, парне пулать. "Сельхозтехника" АОн диспетчерскине пымалла.*

* * *

*Заказ параканăн материалĕпе хваттерсене капăрлататпăр. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Гаранти 8 çул. Адрес: Кузнецов урамĕ, 28, 20 сехет хыççăн пымалла.*

* * *

*Тури Нурлатри çурта сутатпăр е икĕ пўлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр, (нўхреп, мунча, 20 сотка çĕр участокĕ пур). Телефон: 5-24-04.*

* * *

*Лайăх шайри ВАЗ-21013 васкавлă сутăнать, двигательне 1986 çулта туса кăларнă. Адрес: Гоголь урамĕ, 15, телефон: 5-11-02.*

* * *

*"Москвич-412" васкавлă сутăнать, хаклă мар. Адрес: чугун çул клубĕнчи мастерской, 9 сехетрен тытăнса 18 сехетчен пыма пулать.*

* * *

*Тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан "Чайка" телевизор, икĕ камерăллă "Мир" холодильник сутатпăр, лайăх шайра. Адрес: Промышленная урамĕ, 18-1, телефон: 65-3-17.*

* * *

*Дружба урамĕнчи 64-мĕш çурт патĕнче çухатнă "Нокия" телефон аппаратне тупакана тавăрса пама ыйтатпăр, парне пулать (аппаратпа усă курма май çук). Адрес: Дружба урамĕ, 64-7, телефон: 5-17-33.*

* * *

*Чехословакире туса кăларнă çĕнĕ минитрактор (15 пин тенкĕ), çывăрмалли икĕ кравать (усă курнă), тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан "Темп" телевизор, тумбочкăсем, буксир устройстви, В-06 малти кĕленче сутатпăр. Телефон: 5-19-31.*

* * *

*ВАЗ-2101 сутăнать. Адрес: Овражная урамĕ, 3, 17 сехет хыççăн пымалла.*

* * *

*Нариманов урамĕнчи 12-мĕш номерлĕ пăсмалли çурт сутăнать. Адрес: Дружба урамĕ, 75-47.*

* * *

*Кўмеллĕ "Планета", "Днепр" мотоциклсем сутăнаççĕ, лайăх шайра. Телефон: 2-17-30.*

* * *

*Чугун çул поселокĕ хыçĕнчи дача сутăнать, участока кĕркунне алнă. Адрес: Куйбышев урамĕ, 35-7.*

* * *

*Çурт сутăнать. Адрес: Декабристсен урамĕ, 55.*

* * *

*Икĕ пўлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Чапаев урамĕ, 9-18.*

*Тупнă япаласен сĕтелĕ*

*1998 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче кивĕ автозаправка патĕнче енчĕк тупнă. Редакци бухгалтерийĕнче ыйтса пĕлмелле.*



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 859.